Муркаш район хаçачĕ

Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи майăн 5-мĕшĕнченпе тухать

2 (7747) № ✻ Шăмат кун, 2010 çулхи январĕн (кăрлач) 16-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ

Ыран – Чăваш пичечĕн кунĕ

Республикăри чи лайăх райхаçат – «Çĕнтерӳ ялавĕ»

Район тата хула хаçачĕсен республикăри конкурсĕн итогĕсене пĕтĕмлетнĕ. Суйлав турĕ витĕр тухнисем хушшинче 5 район хаçачĕ пулнă: Вăрнар районĕнчи «Çĕнтерӳ çулĕ» («Путь Победы»), Муркаш районĕнчи «Çĕнтерӳ ялавĕ» («Знамя Победы»), Шупашкар районĕнчи «Тăван ен», Çĕмĕрле районĕнчи «Малалла» («Вперед»), Çĕрпӳ районĕнчи «Çĕрпӳ хыпарçи» («Цивильский вестник»).

Конкурсра вара Чăваш Республикинчи «Муркаш районĕнчи «Çĕнтерӳ ялавĕ» («Знамя Победы») хаçат редакцийĕ» автономи учрежденийĕ çĕнтернĕ тесе йышăннă.

2009 çулта хаçат 65 çул тултарнă. Хаçатăн пĕрремĕш номерĕ 1944 çулхи майăн 5-мĕшĕнче «Колхозник сасси» ятпа кун çути курнă.

«Çĕнтерӳ ялавĕ» паян 3637 экземпляр тиражпа тухса тăрать. Район хаçачĕ кулленхи актуаллă ыйтусене вăхăтра çутатать, районти тата республикăри пĕлтерĕшлĕ самантсене асăрхамасăр хăвармасть. Çултан-çул материалсен пахалăхĕ те ӳссе пырать. Редакцире ытти район хаçачĕсенчен маларах – 1996 çулта – хаçата компьютерпа наборласа калăпласси çине куçнă. Çакă унăн сăн-сăпатне тĕпрен улăштарма май панă. 2006 çултан тытăнса çĕнĕ технологие пурнăçа кĕртессипе ĕçлеме тытăннă. Ку вăл хаçата тĕрлĕ тĕспе пичетлеме тытăнассин пĕрремĕш утăмĕ теме пулать.

2004 çулта редакци коллективĕ Чăваш Республикин Президенчĕн Николай Федоровăн Тав сăмахне тивĕçнĕ. 2008 çулта хаçата «Золотой фонд прессы» Пахалăх паллипе чыслана.

ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН КУЛЬТУРА МИНИСТЕРСТВИ.

Çамрăксен çулталăкне çутатассипе Чăваш Республикин Культура, наци ĕçĕсен, информаци политикин тата архив ĕçĕн министерстви тата Чăваш Республикин Вĕрентӳпе çамрăксен политикин министерстви ирттернĕ республикăри конкурсра район тата хула хаçачĕсем хушшинче районти «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат çĕнтерӳçĕ ята тивĕçнĕ.

Çавăн пекех районти «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат республикăри массăллă информаци хатĕрĕсен «Правопорядок» конкурсĕнче «Район хаçачĕсем» номинацире çĕнтерӳçĕ пулса тăнă.

ХИСЕПЛĔ ЖУРНАЛИСТСЕМ, ИЗДАТЕЛЬСЕМ ТАТА ПОЛИГРАФИСТСЕМ!

Сире Чăваш пичечĕн кунĕ ячĕпе саламлатăп!

Профессионализм тата ответлăх, пурнăçри активлă позици, чи çивĕч ыйтусем çине хурав тупма пĕлни – çаксем пурте пресса представителĕсене пĕрлештерсе тăраççĕ. Вĕсем вара – обществăлла пĕлтерĕшлĕ вăйсенчен пĕри. Сире пулах ĕнтĕ республикăра пурăнакансем хыпарсене вăхăтра пĕлсе тăма, кулленхи проблемăсене татса пама тата ыранхи пурнăç мĕнле пулассине шанма пултараççĕ.

Çавна палăртма кăмăллă. Публикацисен пахалăх шайĕ ӳссе пырать, изданисен дизайнĕ лайăхланать, çĕнĕ технологисем пурнăçа кĕрсе пыраççĕ. Массăллă информаци хатĕрĕсенчен чылайăшĕ Интернетра хăйсен представительствисене уçать, Чăваш Енрен аякра та хăйсен вулаканĕсене тупать. Журналистсемпе издательсем хăйсен пултарулăх шайне ӳстерсе пыраççĕ, республика чысне Пĕтĕм Раççейри тата Пĕтĕм тĕнчери конкурссенче тивĕçлипе хӳтĕлеççĕ.

Чăваш Енĕн пичечĕпе культурин историйĕнче чăвашсен пĕрремĕш наци хаçачĕ «Хыпар» пысăк вырăн йышăнать. Малашне те эсир чăваш журналистикине пуçарса яраканĕ Николай Васильевич Никольский хывса хăварнă пултаруллă та пуян традицисене аталантарса пырасса, çапла майпа республика аталанăвне тивĕçлĕ тӳпе хывасса шанса тăратăп.

Сире ăсталăхшăн, пултарулăхшăн, тăрăшулăхшăн, Чăваш Енпе унта пурăнакансен шăпишĕн чурăс пулманшăн тав сăмахĕ калатăп. Пурсăра та çирĕп сывлăх, иксĕлми вăй-хал, кăмăл çирĕплĕхĕ, ăнăçу, телей тата юрату сунатăп!

Н. ФЕДОРОВ,
Чăваш Республикин Президенчĕ.

Малашне те пĕрле пулар

Чăваш пичечĕн кунне пĕрремĕш хут 2000 çулхи январь уйăхĕнче паллă тунă. Ун чухне Чăваш Республикин Президенчĕ Николай Федоров Чăваш пичечĕн кунĕ пирки саккун çине алă пуснă. Çав кунран тытăнса январь уйăхĕнче кашни виççĕмĕш вырсарни кун чăваш журналисчĕсем хăйсен професси уявне паллă тăваççĕ.

Çак куна ЧР Патшалăх Канашĕн депутачĕсем ăнсăртран суйласа илмен. Шăпах çак кун, 1906 çулхи январĕн 21-мĕшĕнче чăвашсен пĕрремĕш хаçачĕн «Хыпарăн» («Вести») пĕрремĕш номерĕ пичетленсе тухнă. Унăн редакторĕ тата хаçата йĕркелекенĕ Хусан университечĕн профессорĕ, пирĕн ентеш Николай Васильевич Никольский пулнă. Хаçат вара Хусанта тухса тăнă. 2006 çулта Чăваш Енре пурăнакансем хаçат тухма тытăннăранпа 100 çул çитнине анлăн паллă турĕç.

Хальхи массăллă информаци хатĕрĕсем хăйсен пĕлтерĕшĕпе Раççей шайĕнче те пысăк вырăн йышăнаççĕ. Чăваш журналисчĕсем республика экономикин тата социаллă аталанăвĕн ыйтăвĕсене çутатса панă чухнехи професси пултарулăхĕшĕн сахал мар ятлă-сумлă пултарулăх конкурсĕсемпе фестивалĕсен çĕнтерӳçисем пулса тăнă.

Çавна та палăртса хăвармалла. Çулсеренех массăллă информаци хатĕрĕсем çутатакан темăсен анлăшĕ ӳссе пырать. Материалсен пахалăхĕ те паянхи кун ыйтăвĕсене тивĕçтерет.

Районти «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат та иртнĕ çул хăйĕн 65 çулхи юбилейне паллă турĕ. Район аталанăвĕнче унăн пĕлтерĕшĕ палăрăмлă. Çакна унăн тиражĕ çулсерен ӳссе пыни те аван çирĕплетет. Хаçат страницисенче çутатакан темăсен анлăшĕ, пĕлтерĕшĕ, витĕмлĕхĕ вара редакцире вăй хуракан журналистсен професси ăсталăхĕпе, пархатарлă ĕçĕ-хĕлĕпе тӳрремĕнех çыхăннă. Кунпа пĕрлех хаçатпа тачă çыхăну тытакан ялти корреспондентсене, вырăнсенчи пĕлтерĕшлĕ пулăмсем пирки информацисене вăхăтра хаçатра пичетлесе кăларма пулăшакансене пысăк тав сăмахĕ калатпăр. Райхаçатпа куллен çыхăнса ĕçлекенсене те тав тăватпăр. Пурсăра та сире Чăваш пичечĕн кунĕ ячĕпе саламланă май пултарулăх ĕçĕнче ăнăçусем, ырлăх-сывлăх, телей сунатпăр!

Районти «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат редакцийĕ.

Хаçат тусĕсенчен пĕри

Сăн ӳкерчĕкре эсир район хаçачĕпе туслă çыхăну тытакансенчен пĕрне Валерий Варсонофьевич Федорова куратăр. Муркаш лицейĕнче вăй хурать вăл. 2008 çултанпа кунта историпе экономикăна вĕрентет. Пĕтĕмĕшле педагогика стажĕ вара 28 çулпа танлашать.

Валерий Варсонофьевич ачасене вĕрентнипе пĕрлех район хаçачĕпе те çирĕп çыхăну тытать. Лицейре вĕренекенсен пурнăçĕпе, тăван культурăпа, историпе çыхăннă статйисемпе корреспонденцийĕсене вулакансем кăмăлласа йышăнаççĕ.

Сăн ӳкерчĕкре вăл (варринче) лицейри пултаруллă вĕренекенсен пĕр ушкăнĕпе.

В. ШАПОШНИКОВ
сăн ӳкерчĕкĕ.

Раççейре

Çурт-йĕр тăвассипе Чăваш Ен малта

Мускавра агропромышленность комплексĕн ыйтăвĕсемпе Правительство комиссийĕн ларăвĕ иртнĕ. Ăна Раççей Федерацийĕн Правительствин Председателĕн пĕрремĕш çумĕ Виктор Зубков ертсе пынă. Ларура 2010 çулчченхи тапхăрти ялсен социаллă аталанăвĕн федераллă тĕллевлĕ программине пурнăçласси мĕнле пынин итогĕсене тишкернĕ.

Çавна палăртнă. Раççей Федерацийĕнчи субъектсен рейтингĕнче 2003 – 2009 çулсенче пурăнмалли çурт-йĕр хута ярассипе Чăваш Республики пĕрремĕш вырăн йышăнать. Иккĕмĕш вырăнта – Пушкăртстан, виççĕмĕшĕнче – Белгород облаçĕ.

Чăваш Ене çавăн пекех газ сечĕсене ĕçе кĕртессипе те малтисенчен пĕри тесе палăртнă. Республика Тамбов тата Оренбург облаçĕсене те хыçа хăварнă. Вырăнти пĕлтерĕшлĕ шыв пăрăхĕсене хута ярассипе вара Чăваш Ен тăваттăмĕш вырăнта.

Юлашки ултă çул хушшинче Чăваш Республикинче 2010 çулчченхи тапхăрти ялсен социаллă аталанăвĕн федераллă тĕллевлĕ программине пурнăçласа 2059 тăваткал метр пурăнмалли çурт-йĕр хута янă. Сăмахран, Тутар Республикинче ку хисеп 572,6 тăваткал метрпа танлашать.

Газ сечĕсене 6607 километр ĕçе кĕртнĕ. Çав вăхăтрах Мускав облаçĕнче – 1756 километр, Пушкăртстанра – 1911 километр.

Педагогика ĕçченĕсене пĕлме

Çăмăллăхсене – компенсаци мелĕпе

Чăваш Республикин 2005 çулхи февралĕн 8-мĕшĕнчи «Граждансен уйрăм категорийĕсене пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă услугăсемшĕн тӳлессипе социаллă çăмăллăхсем парасси çинчен» саккунпа килĕшӳллĕн тĕрлĕ граждансем çак çăмăллăхсемпе усă кураççĕ. 2009 çулхи декабрĕн 9-мĕшĕнчи саккунпа вара унта улшăнусем кĕртнĕ. Вĕсем кăçалхи январĕн 1-мĕшĕнчен вăя кĕчĕç. Çак саккун тавра калаçма редакцие ЧР Сывлăх сыхлавĕн тата социаллă аталану министерствин районти социаллă хӳтлĕх пайĕн пуçлăхне Н.П. ПЕТРОВАНА чĕнтĕмĕр.

– Нина Пантелеевна, саккунри улшăнусем тӳрремĕнех камсене пырса тивеççĕха?

– Çак улшăнусем тӳрремĕн вĕрентӳ тата воспитани парас ĕçре вăй хуракансене тата çак сферăра ĕçлесе тивĕçлĕ канăва тухнă çынсене пырса тивеççĕ. Кăçалхи январĕн 1-мĕшĕччен педагогика ĕçченĕсем, тивĕçлĕ канăва тухнисем те, коммуналлă тăкаксене саплаштарма пăхса хунă çăмăллăхсемпе укçан е натураллă формăпа усă курнă пулсан, халĕ вара çĕнĕ саккунпа килĕшӳллĕн натураллă формăна уйăхсерен паракан компенсаципе улăштарнă.

ЧР Министрсен Кабинечĕ ятарлă йышăнупа укçан парассин калăпăшне те ӳстернĕ. Январĕн 1-мĕшĕнчен вăл 697 тенкĕпе танлашать, ку таранччен 623 тенкĕ 20 пус пулнă.

– Мĕнпе уйрăлса тăрать-ха компенсаци натураллă формăран?

– Педагог уйăхсерен пурăнмалли çурт-йĕре ăшăтма çут çанталăк газĕпе усă курнăшăн тата электроэнергишĕн, коммуналлă хваттерсенче тата хваттере юсаса тытса тăнăшăн тӳлекен тăкаксене те пĕтĕмпех компенсаци формăллă каялла тавăрса параççĕ. Халĕ çак формăна суйласа илес текенсен кăçалхи февралĕн 1-мĕшĕччен районти социаллă хӳтлĕх пайне пырса заявлени çырмалла.

Заявлени çырма пынă чух пĕрле паспорт, иртнĕ çулхи декабрь уйăхĕнче электроэнергишĕн тата çут çанталăк газĕпе усă курнăшăн тăкаксене тӳленине кăтартакан квитанцисем тата, юлашки вăхăтра ĕç вырăнне улăштарнă пулсан е ку таранччен натураллă формăпа усă курман пулсан, шкул директорĕ педагог паянхи кун та ĕçлени çинчен çирĕплетсе алă пуснă ĕç кĕнекин копийĕ кирлĕ.

Çак документсене тăратса заявлени çырсан, 6 уйăх хушши декабрь уйăхĕнчи тăкаксене кура кашни уйăхра компенсаци тӳлесе тăратпăр. 6 уйăх вĕçленнĕ çĕре вара иртнĕ кашни уйăхри квитанцисене (оригиналсене) справка килсе тăратмалла. Уйăхсерен тӳлесе тăракан тăкаксен калăпăшĕ компенсаци укçин калăпăшĕнчен пысăкрах пулсан, районти хӳтлĕх пайĕ укçа хушса тӳлет. Тăкаксем компенсацирен пĕчĕкрех пулсан, ытлашши укçана тытса юлать.

(Вĕçĕ 6-мĕш стр.).

Юбилей

Саламлатпăр

Муркашра пурăнакан, ĕç ĕмĕрĕн ытларах пайне Муркашри тĕп больницăра ĕçленĕ, Е. Андреев яч. хис. хуçалăхри пĕр ĕçрен те пăрăнмасăр ывăлпа хĕрне пурнăç çулĕ çине тăратнă юратнă аннемĕре, асанне-кукамая, ырă кăмăллă тăванамăра – Муркашра пурăнакан тата çывăх кунсенче 70 çул тултаракан **Лидия Алексеевна БАРКОВАНА** – черетлĕ юбилейпа чун-чĕререн ăшшăн саламлатпăр, татах нумай çул пире савăнтарса пурăнма ырлăх-сывлăх сунатпăр. Эсĕ пурришĕн эпир пурте пĕрле савăнатпăр.

Саламлаканĕсем: ывăлĕ, хĕрĕ, кинĕпе кĕрĕвĕ, 3 мăнукĕ, тăхлачипе çывăх тăванĕсем.



Хаклă çыннăмăра, аттене, кукаçие, асаттене, шанчăклă юлташа – Кашмаш ялĕнче пурăнакан, нумай çул ачасене вĕрентес ĕçре вăй хуракан **Игорь Андреевич ЯРИКОВА** 55 çулхи юбилей ячĕпе пĕтĕм чĕререн саламлатпăр. Сывлăху çирĕп пултăр, кун-çулу вăрăм килтĕр, телейӳпе ăнăçу юнашар çӳреччĕр, ĕмĕтӳсем çитсе пыччăр, çемйӳнте татулăхпа килĕшӳ пултăр.

Саламлаканĕсем: мăшăрĕ, хĕрĕсемпе кĕрӳшĕсем, ывăлĕпе кинĕ, 4 мăнукĕ, йышлă тăванĕсемпе тус-юлташĕсем.